Астăвăм

# Манăн атте - Мĕн Сĕнтĕрти Петровский

Кашни ирех Мăн Сĕнтĕртен Муркаша рейс автобусĕ çула тухать. Вăл çынсене район центрне ĕçе илсе килет. Автобус пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ çӳрет. Тахçан вара манăн атте те, Владимир Давыдович Петровский, çак автобуспа ĕçе васканă.

Ку тăрăхри çынсем чылайăшĕ ăна аван пĕлнĕ. Малтан Сĕнтĕр районĕнче, кайран вара, 1960-мĕш çулсен варринчен тытăнса – хальхи Муркаш районĕнче те. Ăна ĕç тăрăх та, интереслĕ çын пулнипе те пĕлекенсем сахал мар пулнă. Вăл кĕнекесемпе питĕ туслă пулнă. Çĕр-шыв историне аван пĕлнĕ, политика хроники енĕпе малта пынă, кунпа пĕрлех тата çакна пĕтĕмпех вăл ыттисене ăнланмалла каласа пама пултарнă.

Вăл вăхăтра çынсем кĕнекесемшĕн тем тума та хатĕр пулнă. Анчах та Мăн Сĕнтĕрте вăл çулсенче ун чухлĕ кĕнеке вуланă çын пулман пулĕ тесе шутлатăп. 1960–1970-мĕш çулсенче «Сĕнтĕр» тата «Петровский» ăнлавсем пĕр-пĕринчен уйрăлман пулĕ. Аттене ун чухне пурте пĕлнĕ тата хисепленĕ. Аттем вара Мăн Сĕнтĕрте кăна вăй хуман.

Кĕнекесене юратнине вăл хăйĕн ĕç вырăнне куçарнă темелле – Чăваш кĕнеке суту-илĕвĕн районти пайĕн пуçлăхĕнче ĕçлеме пуçăннă. Шупашкарта кун пек управлени пулнă. Вăл пĕтĕм республикипе кĕнекесем салатассипе ĕçленĕ. Кунта вара, Муркаш районĕнче, ку ĕçе шăпах ĕнтĕ В.Д. Петровский туса пынă. Нумай ялсенчи магазинсенче вăл çĕнĕ пайсем уçма тата кĕнекесем сутассине йĕркелеме пултарнă. Пур шкул ачисене те сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне учебниксемпе тивĕçтересси мĕне тăнă тата! Вăл çулсенче шкулсенче вĕренекенсем йышлă пулнă, Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче кăна пĕр пин вĕренекен ытла пĕлӳ пухнă.



Кайран вăл Мăн Сĕнтĕр райповĕн председателĕн строительство енĕпе ĕçлекен çумĕнче те тимленĕ. Ун чухне пĕтĕм Раççейĕпе палăрнă райпо коллективне Павел Петрович Петров ертсе пынă. Пирĕн атте вара çĕнĕ магазинсем туса лартассипе тимленĕ. Ун вăхăтĕнче Калмăкра, Калайкассинче, Катькасра магазинсем çĕкленнĕ. Юлашки вăхăтра юсаса илемлетнĕскерсем халĕ те вĕсем Шупашкар трасси енĕпе илемлĕн курăнса лараççĕ. Кĕске вăхăт хушшинче пур çĕрте те тенĕ пекех – Тренкăран тытăнса Мăн Хураçка таран – кирпĕчрен купаланă магазинсем çĕкленнĕ. Строительсен вырăнсенчи бригадисенче вăй хуракансем те, ялти сутуçăсем те унпа пĕр чĕлхе тупса калаçма пултарнă. Ыттисемпе яланах вăл тĕрĕс пулнă, çынсене итлеме пĕлнĕ.

Мăн Сĕнтĕрте те çав çулсенче «Культмаг» магазин корпусĕнче кĕнеке магазинĕ çĕкленнĕ (халĕ «Дружба» продмаг). Кунсăр пуçне ку ялта вăл ĕçленĕ вăхăтра универмага хирĕçех çĕнĕ шкулăн пĕр хутлă корпусĕ çĕкленнĕ. Директор пулса ун чухне математика преподавателĕ Владимир Андреевич Соколов ĕçленĕ. Атте вара вăл вăхăтра шкулта завхозра тăрăшнă. Кунтах манăн анне Татьяна Яковлевна Петровская та нумай çул хушши физкультура урокĕсене ертсе пынă. Мĕн чухлĕ пултаруллă учитель вăй хунă вăл вăхăтра унта!

Пĕрремĕш хут çурта пăспа ăшăнакан тунă. Ăшăра та çутăра Мăн Сĕнтĕр ачисенчен сахал мар унта вĕреннĕ. Халĕ вара çак хăтлă вырăнта тĕслĕх библиотека тата çамрăксен кану центрĕ вырнаçнă. Ку тĕрĕс те: кĕнекесене юратакан çын туса лартнă çуртра халĕ вулав залĕ. Манăн атте архитектор пулман, унăн ятне асăну хăми çине те çырса хумĕç. Хăйĕн пĕрремĕш профессийĕпе вăл – платник. Магазинсем, шкул, библиотека та асăну сооруженийĕсем мар. Вĕсенче çынсен кулленхи пурнăçĕ иртет: вĕренӳ, ĕç, вулав. Унăн пурнăçĕ вара виçĕ çул каялла татăлчĕ.

Манăн аттепе пĕр вăхăтра ĕçленисем нумай мар. Шăпах вĕсем ĕнтĕ çерем çĕрсене уçнă, Чăваш Ене электрификациленĕ, çуртсем тунă тата ачасене вĕрентнĕ, пĕрремĕш совет космонавчĕсемпе хăпартланнă.

Манран вара хам хăçан çурални пирки ыйтсан, «Пĕрремĕш спутник вĕçсе кайнă чухне» тесе хуравлаттăм. Ун чухне вара эпĕ хамăн ятăма кăна пĕлнĕ, хушаматăма пĕлмен те.

**Валерий ПЕТРОВСКИЙ.**

Информаци кунĕнчен

# Тĕл пулу усăллă иртрĕ

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Чăваш Республикин вĕрентӳ, çамрăксен политикин министрĕ Г.П. Чернова вара район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа пĕрле Чуманкасси ял тăрăхне çитсе курчĕ. Кунта вĕсем Чуманкасси шкулĕнче пулчĕç. Чи малтанах министр вĕренӳ пӳлĕмĕсенче пулса курчĕ. Тĕрлĕ ыйтусем парса ачасен пĕлĕвне тĕрĕслерĕ. Учительсен ĕçне паян шăпах ĕç результатне кура хаклаççĕ-çке. Чăваш Республикин Гимне пурин те пĕлмеллине палăртрĕ.

Учительсене ĕç укçи тӳлес йĕрке çинче вара Галина Петровна вĕрентекенсемпе иртттернĕ тĕл пулура уйрăммăн чарăнса тăчĕ. Пултаруллă вĕрентекенсене ĕç укçине хушса тӳлеме хавхалантару фончĕ йĕркелерĕç. Иртнĕ çул вăл 10 процентпа танлашрĕ. Кăçал – 20 процентпа. Çитес çул вăл татах та хăпарассине палăртрĕ. Галина Петровна çитес çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа пĕрлехи тариф сеткине пăрахăçланине пĕлтерчĕ. Унпа çыхăннă улшăнусем çинче чарăнса тăчĕ.

– Мĕн çитмест сире ачасене тарăн пĕлӳ пама? – ыйтрĕ вăл вĕрентекенсенчен.

Кунти коллектив калашле, çакна валли условисем пур. Шкул директорĕ В.М. Васильев каланă тăрăх, кадр проблеми çук шкулта. Пĕрлехи патшалăх экзаменĕсемпе те иртнĕ çул кăтартусем виçĕм çулхинчен лайăхланчĕç. Кăçал Чуманкассисем 4 класс-комплект илчĕç.

–Кăçал татах та ӳсĕмлĕрех ĕçлесен, пулăшу çитес çул ытларах пулĕ, – терĕ министр.

Галина Петровна шкул библиотекин фондне çĕнетмелли çинче уйрăммăн чарăнчĕ. Мĕншĕн тесен кирлĕ мар кĕнекесене фондран кăлармасан, кĕнеке-учебник ахаль те нумай тесе çĕнĕ учебниксем илмесĕрех тăрса юлма пулать.

Тĕпрен илсен вара министра Чуманкасси шкулĕ малалла туртăнни килĕшрĕ, малашне паянхинчен те ӳсĕмлĕрех ĕçлемеллине палăртрĕ.

Ыйтусем те пулмарĕç мар кунта. Вĕрентекенсем пуçламăш класра вĕренекенсем валли килекен сĕтел-пукан ял ачишĕн çӳллĕрех пулнине палăртрĕç.

–Кăна эпĕ пĕлмен. Хальлĕхе вара ĕç урокĕсенче пĕчĕккисем валли пукан çине ятарлă подставкăсем туса тухма сĕнчĕ лару-тăруран. Чуманкасси шкулĕн Президенчĕн Катя Иванован ыйтăвĕ çине те хуравларĕ: пĕрлехи патшалăх экзаменĕсем ку вĕренӳ çулĕнче те малтанхи пекех вырăс чĕлхипе тата математикăпа пулĕç. Тепĕр виçĕ предметне ачасем хăйсем суйласа илĕç. Çав хушма предметсемпе тĕрĕслемелли экзаменсем иртттернĕ чухнехи çитменлĕхсене пĕтермеллине те каларĕ.

Ун хыççăн информаци ушкăнĕ Муркашри вăтам шкулта пулчĕ. Шкулăн ĕçĕхĕлĕпе шкул директорĕ В.В. Ялушкин паллаштарчĕ. Министр вĕренӳ пӳлĕмĕсенче пулса курчĕ. Унтан актовăй залра Галина Петровна районти шкулсен директорĕсемпе, ача сачĕсен заведующийĕсемпе, Муркаш шкулĕн вĕрентекенĕсемпе тĕл пулчĕ. Калаçу, тĕпрен илсен, вĕрентӳ сферинче вăхăта сая ямасăр тумалли ĕçсем çинчен пулчĕ. Мĕн тумалла Муркаш районĕнчи шкулсен кăтартусене лайăхлатас тесен? Çак ыйтусемпе анлă калаçу **(кун пирки çитес номерсенчен пĕринче тĕплĕнрех вуласа пĕлме пултаратăр)** ирттерчĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

Ĕçре тăрăшуллисем

# «Хам профессирен пĕлтерĕшлĕреххине тупаймарăм»



***Районти тĕп больницăра ача-пăча тухтăрĕнче ĕçлекен Зоя Алексеевна Андреева çак кунсенче хăйĕн 60 çулхи юбилейне паллă турĕ. 1974 çултанпа вăл районти тĕп больницăра вăй хурать. Эпĕ унпа хăйĕн ĕç пӳлĕмĕнче тĕл пултăм. Паллă ĕнтĕ, тухтăр ĕçĕ çăмăл мар, ача-пăча тухтăрĕ пуласси вара – пушшех те. Пур чухне вĕсем хăйсене кансĕрлекен туйăмсем пирки те тĕплĕн каласа пама пултараймаççĕ. Тĕрĕс диагноз лартасси, сиплев ĕçĕсене туса ирттересси пĕтĕмпех тухтăрăн ăсталăхĕпе тăрăшулăхĕнчен килет. Çавăнпа та унпа тĕл пулнă май эпĕ вăл çак профессие епле майпа суйласа илни пирки кăсăкланмасăр пултараймарăм.***

**– Зоя Алексеевна, хăвăра тухтăр ĕçне халалласси хăçан тата епле майпа çуралчĕ-ха сирĕн?**

– Эпĕ медицина ĕçченĕсен çемйинче çуралса ӳсрĕм. Аттепе аннерен пулĕ ку тесе шутлатăп. Атте, Алексей Иванович Иванов, Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче те санинструктор пулнă, нумай-нумай çын пурнăçне çăлса хăварнă. Вăрçă хыççăн Советски районĕнче санэпидстанцире вăй хунă. Çынсене трахома, пыйтă-шăрка тата ытти ерекен чир-чĕртен сыватассипе çине тăрса ĕçленĕ.

Анне, Ольга Александровна, 1942 çулта Шупашкарти медицина училищинчен вĕренсе тухнă. Кайран Советски районĕнче ĕçлеме пуçланă. Аттепе паллашнă, пĕрлешнĕ, 3 ача çуратса пăхса ӳстернĕ. Анне 1952 çултан тытăнса 1986 çулччен Турайри участок больницинче 30 çул хушши акушеркăра, кайран медицина сестри пулса ĕçлерĕ. Пурĕ 44 çул.

Хальхи вăхăтра эпĕ шутлатăп та тĕлĕнетĕп. Врач тавраşĕ больницăра пулман. Ачасем вара вăл вăхăтсенче чылай çуралатчĕç. Таврари 20 ялтан хĕрарăмсем çăмăлланма Турай больницине пынă. Астăвасса, анне ĕçе тухса каятчĕ те вăл хăçан ĕçрен килессине пĕлместтĕмĕр те. Çĕрле те, кану кунĕсенче те чĕнсе тухса кайнисем сахал мар пулнă.

**– Апла пулин те медицина ĕçченĕн профессине суйласа илес терĕр-и?**

– Аттепе анне килте ларман. Çавăнпах пулĕ пирĕн çемьери ачасем ирех ĕçе хăнăхнă. Уйрăмах аннен йывăр ĕçне курса тăнă пулин те, эпир, унăн ачисем, çынсене тата медицинăна юратма ирех вĕреннĕ. Çынсен сывлăхне сыхлассинчен, вĕсене сиплессинчен пархатарлăрах ĕç çук вĕт-ха. Кунсăр пуçне сыватнă çын тухтăра чун-чĕререн тав тунинчен пахараххи мĕн пултăр. Пĕтĕм чĕререн вĕт-ха çакă.

Манăн питĕ медицина ĕçченĕ пулас килетчĕ. Уйрăмах вара ачасене пулăшу парассипе кăсăкланаттăм. Çапла вара эпĕ 1966 çулта Турай шкулне кĕмĕл медальпе вĕренсе пĕтернĕ хыççăн Чулхулари медицина институтне педиатри факультетне вĕренме кĕме заявлени патăм. Вăл çул 10-мĕш тата 11-мĕш классенчен вĕренсе тухакансем пĕр тапхăрта шкул пĕтернĕрен конкурс питĕ пысăк пулчĕ. Эпĕ вĕренме кĕреймерĕм. Çакă мана питĕ хурлантарчĕ пулин те, хама алла илтĕм, Турай аптекинче санитаркăра ĕçлеме пуçăнтăм. Кĕнекесем сахал мар туянтăм, хам тĕллĕнех тепĕр хут института вĕренме кĕме хатĕрлентĕм.

**– Медицина ĕçченĕн профессине хăш вĕренӳ заведенийĕнче алла илме май килчĕ вара?**

– 1967 çулта Шупашкарта педиатри факультечĕ пулман. Вăл вăхăтра эпир, ялта ӳснĕ ачасем, ниçтах та тухса çӳреймен. Анчах та вĕренсе ача-пăча тухтăрĕ пулас туйăм манăнне пур иккĕленĕве те сирсе ячĕ. Эпĕ вара Свердловск хулине тухса кайрăм, унта каллех медицина институчĕн педиатри факультетне вĕренме кĕме заявлени патăм. Экзаменсене тытса чиперех вĕренме кĕме пултартăм.

Ку институт ун чухне çĕршыври паллăраххисенчен пĕри пулнă. Çавăнпа та эпĕ унта пĕлӳ илме пултарнишĕн питĕ савăнатăп.

**– Ĕç биографине хăçан тата ăçта пуçларăр-ха?**

– Малтанах çавна каласа хăварасшăн. 1971 çулта Тойкилтĕ ялĕнче çуралса ӳснĕ Алексей Андреевич Андреевпа çемье çавăртăмăр. Вăл вăхăтра ку тăрăхра пĕрремĕш хут клубра туй турăмăр. 1972 çулта пирĕн пĕрремĕш хĕр ача Людмила çуралчĕ. Эпĕ вара юлашки курсра вĕренетĕп. Мĕн тумалла-ха? Мăшăр вăл вăхăтра Турай шкулĕнче истори учителĕ пулса ĕçлетчĕ. Вăл мана пулăшрĕ, административлă отпуск илсе ĕçе вăхăтлăх пăрахрĕ, 6 кунхи ачана хăй аллине илчĕ. Çапла вара вăл мана вĕренсе тухма май туса пачĕ.

1973 çулта институтран вĕренсе тухнă хыççăн мана Сĕнтĕрвăрри районне ĕçлеме ячĕç. Вăл вăхăтра районта та ача-пăча тухтăрĕсем çителĕксĕр пулнă. Çавăнпа та ку çулсенче район больницин тĕп врачĕ пулса ĕçленĕ В.К. Филиппов районти тĕп больницăна ĕçлеме килме питĕ ӳкĕтлерĕ. Сĕнтĕрвăрринче пире хваттерне те панăччĕ ĕнтĕ. Кунсăр пуçне Муркаш районĕ çуралнă ачасем вилессин шайĕпе республикăра лайăххисен шутĕнче пулман. Вăтамран 100 ачаран 5,6 проценчĕ ытла вилнĕ. Апла пулин те эпĕ хамăр районах килме килĕшрĕм. Çапла вара 1974 çултанпа хамăр районти тĕп больницăра ача-пăча уйрăмĕн заведующийĕнче ĕçлеме тытăнтăм.

**– Ĕçлеме тытăннă пĕрремĕш çулсем пирки мĕн калама пултаратăр?**

– Чăннипех çăмăл пулмарĕ. Мансăр пуçне районĕпе тепĕр ача-пăча тухтăрĕ Р.И. Манина кăна пулнă. Çулталăкне 840–870 ача çуралатчĕ. Эпĕ ĕçлеме тытăннă вăхăта пĕрремĕш уйрăмра 40 ача вырăнне 67 ачаччĕ. 36 ача çулталăка та çитмен. Питĕ йывăр чирлекеннисем 5 ачаччĕ. Йывăр чирлекен ачасене хулана сипленме ăсатма та вăл вăхăтра майсем сахалрахчĕ. Юрать-ха медицина сестрисем опытлăскерсем пулнă. Вăтанса тăман, мĕн пĕлменнине вĕсенчен те сахал мар ыйтса пĕлнĕ, вĕреннĕ.

Васкавлă пулăшу машинисем пирки ĕмĕтленме те пултарайман. Çулсем япăхчĕ. Вырăнсенчен чирлисене больницăна пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен груз турттармалли дежурнăй машинисемпе леçетчĕç. Реанимаци палати, пĕр хут усă курмалли системăсем, шприцсем, пулăшу памалли ытти аппаратура пирки сăмах та пулман. Ача-пăча тухтăрĕсем çитменрен талăкĕ-талăкĕпех уйрăмран тухма пултарайман. Чирлĕ ачасене обход тунă хыççăн ача çуратмалли уйрăма васканă. Кăшт вăхăт пулсанах поликлиникăра ĕçлеме пулăшнă. Нихăçан та ку манăн ĕç мар тесе тăман. Эпир, ачапăчасен икĕ тухтăрĕ, час-часах кунĕпе те пĕр-пĕрне курманни пулнă. Мĕншĕн тесен ĕçĕ питĕ нумай пулнă иксĕмĕр валли.

Час-часах ялсем тăрăх та çӳреме тиветчĕ.10 çул хушшинче кашни çул эпир пулман-курман пĕр ял та юлман темелле.

Ачасемпе ĕçлеме нихăçан та çăмăл пулман. Çавăнпа пулĕ вырăнти пуçлăхсем умĕнче ĕçлĕ пулса сулкаланса çӳремен, юрама тăрăшни те нихăçан та пулман. Эпĕ ĕçре ыттисем хушшинче палăрсах тăман. Анчах та хамран хам яланах çирĕп ыйтнă. Мĕншĕн тесен хамăн çитменлĕхсене хамран лайăх никам та пĕлме пултарайман. Вĕсене пĕтерме тăрăшнă.

**– Юлашки вăхăтра ача-пăча сывлăхне сыхлассинче пулса иртнĕ улшăнусем пирки калас пулсан?..**

– Эпĕ ĕçлеме пуçланăранпа Муркаш больницинчен 15 ача-пăча тухтăрĕ е урăх ĕçе куçрĕ, е урăх çĕре тухса кайрĕ. Эпĕ вара кунтах юлтăм. Пирĕн ӳсĕмсем те курăнсах пычĕç. Ачасем вилесси чакса пычĕ. 1982 çултан тытăнса районта ача-пăча тухтăрĕсен шучĕ хушăнса пычĕ, çитĕнӳсем те, кăтартусем те лайăхланчĕç. Ачасене сыватма условисем те лайăхланаççĕ. Тĕрлĕрен оборудовани юлашки çулсенче сахал мар туяннă. Вĕсем пĕтĕмпех ачасен сывлăхне сыхлас ĕçе çӳллĕ шайра туса ирттерме май параççĕ. «Сывлăх» приоритетлă наци проекчĕ те ку енĕпе пысăк тĕкĕ пулса тăрать.

**– Зоя Алексеевна, хăвăрăн çемье пурнăçĕ пирки те ыйтса пĕлнĕ пулăттăм.**

– Пурнăç пурнăçах вăл. Унта темĕн те пур: лайăххи те, япăххи те. Мăшăрпа пилĕк ача çуратса пăхса ӳстертĕмĕр. Пĕр ачаллă çемьене пилĕк ачаллипе ниепле те танлаштараймăн. Вĕсем пĕр пекех илемлĕ те хăтлă тумланасшăн, тутлă çиесшĕн, ыттисенчен юласшăн мар.

Мăшăрпа иккĕн те яланах ĕçлеме тăрăшнă. Çынсенчен иртерех тăнă, кая юлса çывăрма выртнă. Ачасене вара мĕн пĕчĕкрен ĕçе юратма, сăпайлă пулма, ватăсене хисеплеме, пулăшма, укçа-тенкĕ хакне пĕлме вĕрентнĕ. Халĕ вĕсем аслă пĕлӳ илнĕ ĕнтĕ. Кĕçĕнни 3-мĕш курсра И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университетĕнче вĕренет.

Пурнăç çулĕ вара тумхахсемсĕр мар. Кунта калама çук, нимĕнпе танлаштараймих çухатусем те пулаççĕ. Анчах пурăнмаллах, çӳлтен панă хуйхăсене чăтса ирттермеллех. Манăн 85 çул тултарнă юратнă анне, ачасем пур. Вĕсене эпĕ питĕ кирлĕ. Яланах манăн лайăх ĕç коллективĕ, килĕштернĕ ĕç пулнă. Манăн тавра хам хисеплекен тата хама хисеплекен çынсем, килĕштерсе пурăннă пускилсем, тăвансем. Тавах вĕсене пурне те.

Мăшăрăм вара А.А. Андреев чылай çул Ленин ячĕпе хисепленекен колхоз председателĕ пулса ĕçлерĕ. 2005 çулта çĕре кĕчĕ.

Йăмăкăм А.А. Скворцова та районти тĕп больницăрах вăй хурать. Вăл чылайранпа ĕнтĕ врач-лаборантка.

**– Зоя Алексеевна, Сире юбилей ячĕпе саламланă май ырлăх-сывлăх, вăрăм ĕмĕр, ăнăçусем кăна суннă пулăттăм.**

**В. ШАПОШНИКОВ**
**калаçнă.**